# Юрă-кĕвĕ ăсти



Вера АРХИПОВА сăн ÿкерчĕкĕ

**Наци вулавăшĕнче музыка тĕнчине кăмăллакансем пĕрле пуçтарăнса тĕл пулу, калаçу, концерт ирттерессине йăлана кĕртнĕ. Юлашки çулсенче Светлана Макарова музыка тĕпчевçи тата Вера Архипова, искусствăпа литература пайĕнче информаципе тивĕçтерекен тата массăллă ĕçшĕн яваплă тĕп специалист, пуçарнипе «Мерчен» юрă-кĕвĕ тĕпелĕ йĕркеленĕ. Вăл Чăваш Енри музыка искусствипе паллаштарас, тăван халăхăн йăли-йĕркине упраса хăварас, çĕнĕ варкăш кĕртсе куракан патне çитерес тĕллевпе ĕçлет. Çавăн пекех «Мерчен» кĕтречĕ чăваш культурипе искусствин паллă деятелĕсен пурнăçĕпе пултарулăхне туллин кăтартса парас енĕпе те тăрăшать.**

Хальхинче тĕл пулăва Филипп Лукин композитор, дирижер, патшалăх тата общество деятелĕ çуралнăранпа 105 çул çитнине халалларĕç. Паллă çак пулăм тĕлне Наци библиотеки «Филипп Лукин – юрă-кĕвĕ ăсти» электрон кăларăм хатĕрленĕ. Унта композиторăн нумай енлĕ пултарулăхне анлăн кăтартса пама тăрăшнă. Пуян материал культура тытăмĕнче ĕçлекенсене çеç мар, ахаль çынсене те кăсăклă пулĕ. Çавăнпах музыкçă пултарулăхĕпе çыхăннă компакт-диска пахаламашкăн республикăри культурăпа ÿнер ĕçченĕсем, наукăпа вĕрентÿ тытăмĕнче тăрăшакансем, Ф.Лукинăн ентешĕсем тата студентсемпе вĕренекенсем чылайăн пуçтарăнчĕç. Чăваш наци конгресĕн культура комитечĕн хастарĕсем те çак мероприятирен юлмарĕç.

Вера Архипова ертсе пыракан уяв программи хăйне евĕрлĕ, питĕ пуян пулчĕ. Тухса калаçакансем пултаруллă ентешпе мăнаçланнине, унăн ĕçĕ-хĕлĕпе ят-сумĕ çитĕнекен ăрăва пĕчĕклех тăван ене юратма вĕрентине каларĕç. Композиторăн пурнăçне аса илчĕç. Чăваш Республикин композиторсен союзĕн ертÿçи Николай Казаков унăн кĕввисем вăрçă хыççăнхи çулсен самана палли пулса тăнине палăртрĕ. «Эпир, хальхи чăваш композиторĕсем, ăна чунтан тав туса аса илетпĕр. Пире пултарулăх çулĕ çине кăлармашкăн вăл пĕр вĕçĕмсĕр тăрăшнă», – терĕ.

Пухăннисене композиторăн Мускаврра пурăнакан мăнукĕ Марианна Левитова видеокурав мелĕпе саламларĕ, аслашшĕне чăваш халăхĕ манманшăн, пултарулăхне сума сунăшăн тав турĕ.

Ф.Лукин хăйĕн ĕçĕсемпе Раççей культурин ылтăн фондне те пуянлатнă. Унăн ячĕ Раççей культурин юрă ÿнерĕнче Т.Хренников, А.Новиков, М.Блантер, С.Туликов, Н.Жиганов, А.Пахмутова ячĕсемпе юнашар тăрать. «Камерлă сочиненисем те, унăн юррисем пекех, кĕвĕ илемĕпе паларса тăраççĕ. Вĕсенчен хашĕ-пĕри тĕнчипе паллă музыкантсен – Э.Грач, В.Жук, Л.Евграфов, А.Любимов, В.Галкин тата ытти ăстан репертуарне кĕрсе чикĕлеш енче те янăрама тивĕçлĕ пулчĕç», – çырать Юрий Юлюхин музыковед.

«Унăн кĕввисемпе çырнă юрăсене çĕршыври чи паллă композиторсемпе ÿнер тытăмĕнче тăрăшакансем пысăка хурса хакланă. Ф.Лукин еткерлĕхĕ тĕнче шайĕнче, çулсем, ĕмĕрсем иртсен те хăй хакне çухатмĕ», – çирĕплетрĕ Светлана Макарова музыковед.

Паллă композитор пирки искусствоведени наукисен кандидачĕ Любовь Бушуева каласа пачĕ. Вăл Филипп Миронович çинчен М.Кондратьев редакциленĕ «Филипп Лукин: музыкант. Общественный деятель» /Филипп Лукин: музыкçă. Общество пурнăçĕн хастар ĕçченĕ/ ятлă документсен пуххи тухни пирки аса илтерчĕ.

Пултаруллă композиторпа В.Давыдов-Анатри, Ю.Сементер, А.Артемьев, А.Кăлкан, Г.Ефимов, Г.Краснов паллă поэтсем туслă ĕçленĕ. Чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер пухăннисене пурте пĕлекен «Уçланкăри палан» юрă мĕнле çурални çинчен каласа кăтартрĕ. «Филипп Лукин композиторпа чĕрĕк ĕмĕр алла-аллăн ĕçлесе вăтăра яхăн юрă çыртăмăр. Çавсенчен чи палли, чи ăнăçли, манăн шухăшпа – «Уçланкăри палан» юрă», – палартрĕ вăл.

Филипп Мироновичпа культура каçалăкĕнче нумай çул пĕрле ĕçленĕ музыковед, тележурналист Александр Осипов та сăмах илчĕ: «Филипп Лукин пирĕншĕн аслă юлташчĕ, чăн-чăн искусство халăх пултарулăхĕ çинче никĕсленмеллине яланах асра тытма вĕрентетчĕ».

Уяв концертне курма кăсăклă пулчĕ. Унăн пурнăçне сăнлакан видеофильм та пуçтарăннисен кăмăлне кайрĕ. «Мерчен» тĕпелĕнче «Музыкăна панă пурнăç» ятпа кĕнеке экспозицийĕ ĕçлерĕ.

Музыка енĕпе Ф.Павловран, С.Максимовран, В.Воробьевран пил илсе юлнăскер, каярахпа И.Дунаевский музыкçăпа çыхăну тытса ĕçленĕскер хăйĕн хастарăхĕпе пултарулăхне наци культурине аталантарас ĕçе хывнă. Ентешĕмĕрĕн сумлă та сăваплă ячĕ чăваш халăх кун-çулĕнче пысăк сас паллисемпе çыранса юлнă.

**Максимилиан СЕВАСТЬЯНОВ,**
**ЧНК культура комитечĕн пайташĕ.**